**Тема «Хĕлле»**

**Урок тĕллевĕ:** ачасен чăвашла пуплевне пур енлĕн аталантарасси, хĕллехи çанталăк çинчен, сывлăха упрасси тата хĕл каçакан кайăксене хĕлле мĕнле пулăшасси çинчен …..

Урок задачисем: ыйтусене хуравлама, чăвашла предложенисем йĕркелеме хăнăхтарасси, паллă ячĕсеме усă курса кластер тума хăнăхтарасси, итлен , текст содержанийĕ тăрăх калаçу ирттересси çут çанталăка упрас ыйтăва хускатасси….

**Урок юхăмĕ**

**Ачасене сывлăх сунни, паллашни:**

- Сывлăх сунатăп, ачасем. Эпĕ Луиза Германовна ятлă. Ман сирĕнпе паян урок ирттермелле. Манăн кăмăл питĕ лайăх. Сирĕн кăмăл мĕнле? Апла пулсан пĕр-пĕрин пăхса йăл кулар та ĕçлеме тытăнар.

1. ***Урок темине палăртни:***
   *Халĕ эпир сирĕнпе пĕр çавра сăвă вуласа пăхăпăр.*

Хирсенче юр анчах,

Çырмара пăр анчах,

Сивĕтет аванах…

Вăл хăçан пулать-ши?

К. В. Иванов

- Хĕлле

-Тĕрĕс. Апла паян эпир хĕлле çинчен калаçăпăр. Чӳречерен пăхăр-ха. Урамра та пирĕн питĕ лайăх хĕллехи çанталăк.

**Доска çине плакат çакатăп «ХĔЛЛЕ».**

2. ***Фонозарядка***
   Халĕ сирĕнпе чĕлхесене вылятса илĕпĕр:

-ле – ле - ле, акă çитрĕ те хĕлле,

-ра – р а - ра, шурă юрĕ ман тавра,

-са – са - са, эп тухатăп savăнса.

-ма – ма – ма , юр пĕрчипе выляма

Фонозарядка содержанине аса илесси

**3. Ачасем, юр мĕнле пулать**

-Юр мĕнле пулать? Мĕн тĕслĕ?

**4 Кластер**

- Ачасем, халĕ юр мĕнле пулма пултарнине пушă çавракасене лартар. (хăш-пĕр сăмахĕсем ытлашши). Тимлĕ пулăр!

шурă, çемçе, хытă, хĕрлĕ, сивĕ, симĕс

2 ушкăн кластерсене улăштарса тĕрĕслеççĕ. Юр мĕнле пулнине вуласа параççĕ. Хăш сăмахсем ытлашшине ăнлантараççĕ. Юлашки сăмахĕ **сивĕ.**

**5. Хĕллехи тумтир**

-Çанталăк хĕлле мĕнле? Сывлăха упрас, чирлес мар (чтобы не болеть) тесен эсир мĕн-мĕн тăхăнатăр (какую одежду одеваете)?

Ачасем хуравлаççĕ. (Экран çине хĕллехи çипуç ячĕсем тухаççĕ).

Пирĕн пата Илемпи хăнана килнĕ. Унăн хĕллехи çипуç çук.

- Халĕ сирĕн Илемпие тумланма пулăшмалла. Доска çине Илемпипе юнашар çипуç ўкерчĕкĕсене çыпăçтарса хумалла, çипуç ятне каламалла.

*2 ушкăна çипуçсем валеçсе паратăп* (унта хĕллехи çипуç та, çуллахи çипуç та пур).

Кĕрĕк, калпак, çĕлĕк, шарф, куртка, алсиш, çăм атă, хĕллехи атă, пальто,

хĕллехи ботинка (Сарафан, футболка, шлепке, беретка, шорты, топик.)

- Эпĕ Илемпие çăм атă тăхăнтартатăп. Эсир мĕн тăхăнтартатăр?

Ачасем кашни черетпе Илемпие мĕн тăхăнтартнине каласа пыраççĕ.

- Капла тăхăнсан сивĕ пулмасть. Маттур, ачасем!

Илемпи сире тав тăвать. Вăл сирĕнпе зарядка тăвасшăн. Килĕшетĕр-и?

**6. Физкультминутка (кану саманчĕ).**

Илемпи ирех тăрать,

Физзарядка вăл тăвать,

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă,

Пиллĕк, улттӑ, çиччĕ, саккăр.

Ларать, тăрать,

Ларать, тăрать,

Унтан чупма тытăнать.

**7. Аудировани**

Халĕ эпир сирĕнпе Лидия Саринен сăввипе паллашăпăр.Унта тĕл пулакан сăмахсене тишкерĕпĕр.

**Словарь ĕçĕ:**

Шăтăр-шăтăр сивĕ – трескучий мороз, стужа, лютый мороз

Чĕтрет – дрожит

Йăмра - ветла

Çĕлĕк -шапка

Кăчăртатать – хрустит

Çăм чăлха – шерстяные носки

Итлесе пăхар-ха Лидия Саринен «Шăтăр-шăтăр сивĕре» сăввине

Сăвва тишкерни:

-Хĕлле мĕнле çанталăк?

- Мĕншĕн йăмра чĕтрет?

- Автор мĕн-мĕн тăхăннă?

- Кушак мĕн те пулин тăхăннă-и?

- Кушак валли мĕнле парне тăвасшăн юлташĕ?

**8. Кайăксем – пирĕн туссем.**

Хĕлле эпир тумланатпăр та – пире сивĕ мар. Кушак урамран киле кĕрсен ăна та сивĕ мар. Вăл апат çиет те канать. Анчах кайăксене вара питĕ сивĕ, вĕсен çимелли çук. Çулла кайăксем пире пулăшаççĕ, хĕлле пирĕн вĕсене пулăшмалла.

- Кайăксене пулăшас тесен мĕн тумалла?

Çакăн çинчен халь эпир сирĕнпе предложенисене вĕçлесе çыратпăр. Панă сăмахсемпе усă курмалла (Завершить предложения используя данные ниже слова).

Хĕлле кайăксене …….. …(холодно).

Вĕсене ……………. (надо помогать).

Кайăксене эпир ……. ….çитеретпĕр.

*Слова для завершения предложений: сивĕ, пулăшмалла, апат*

Ачасем хăйсен ĕçĕсене пĕр-пĕринпе улăштарса тĕрĕслеççĕ, предложенисене вуласа параççĕ. Текста куçараççĕ.

**8. Çут çанталăка упрасси – охрана природы.**

-Ачасем, çут çанталăка тата мĕнле упрама пулать?

- 

| | |
|---|---|
| • | • Чăваш республикинче<br>2024 çул<br>Экологи культурипе çутçанталăкпа<br>перекетлĕ усă курмалли çул. |

Çут çанталка усă кӳрес тесен мĕн тумалла ?

**Что может сделать каждый из нас для сохранения природы?**
Не ломать веток - туратсене хуçас çук
не разводить костры – кăвайт чĕртме юрамасть
бороться с мусором –çӳпĕлеме юрамасть
изготовлять кормушки и домики для птиц -кайăксене валли сырăшсемпе вĕллесем тумалла
сажать растения в зеленых зонах– урамсенче йывăçсемпе чечексем лартмалла

**Пĕтĕмлетӳ:**
- Паянхи урокра эпир мĕн çинчен калаçрăмăр?

- Сире хĕл килĕшет-и?

-Хĕлле çанталăк мĕнле?

- Чирлес мар тесен мĕн-мĕн тăхăнмалла?

-Хĕлле кайăксене мĕнле пулăшмалла?

Илемпи сире валли «Юр чăмакки» вăйă хатĕрленĕ. Сире выляма сĕнет. Кама юр лекет, çав хĕллепе çыхăннă сăмах калать. Эпĕ пуçлатăп.

- Юр пĕрчи …..

**Рефлекси**

Илемпипе урокра ĕçлеме сире килĕшрĕ-и?

Килĕшрĕ пулсан, эпир ăна чечексем парнелĕпĕр. Паянхи урока пĕтĕмлетсе

хăвăр кăмăла пĕлтерĕр.

Мана урок питĕ килĕшрĕ – сарă чечек (мне урок очень понравился – жёлтый цветок)

Мана урок килĕшрĕ – хĕрлĕ чечек (мне урок понравился –красный цветок)

Мана урокра хăш-пĕр япаласем килĕшсех каймарĕç - кăвак чечек (на уроке понравилось не всё – голубой цветок)

- Халĕ, ачасем, эсир хăвăра урокшăн оценка лартса парăр. Мана йăтса кăтартăр.

Ачасем, эсир паян урокра питĕ лайăх ĕçлерĕр. Сире паян пурне те «Пиллĕк» лартса паратăп.

Тавтапуç, ачасем, урока ирттерме пулăшнăшăн. Мана сирĕнпе ĕçлеме кăмăллă пулчĕ. Сывă пулăр, тухма юрать.